10-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1943
ИЮЛЬ
6
ЫТЛАРИКУН
137(6374) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ÇĔНĔ ВĔРЕНŸ ÇУЛНЕ ХАТĔРЛЕНМЕЛЛИ ХĔРŸЛЛĔ ТАПХĂР

Çутĕç фронтĕнче тÿрĕ кăмăлла тăрăшса ĕçлекенсем тырпул пуха кĕртмелли вăхăт çитиччен шкулсене çĕнĕ вĕренÿ çулне тĕплĕн хатĕрлесе çитерессишĕн мĕнпур вăйпа пултарулăха хурса кĕрешессĕ.

Çураки хыççăнхи тата уборка умĕнхи вăхăтри шкул сехечĕ хакла. Пусăрулă руководительсем халĕ хĕрсех шкул çурчĕсене юсаттараççĕ, шкул хуçалăхне йĕркене кĕртеççĕ, вутă хатĕрлесе турттараççĕ, вĕренекенсем валли çителĕклĕ таран учебниксемпе вĕренÿ хатĕрсем, наглядлăх пособисем хатĕрлесе курассишĕн тăрăшаççĕ, шкул çулне çитнĕ тата шкулта вĕренме тивĕçлĕ кашни ачана шкула çÿретмелли майсем туса хатĕрлеççĕ.

Халĕ çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленмелли чи ответлă та хĕрÿллĕ тапхăр. Шкул директорĕсемпе заведующийĕсем, учительсем, ялсемпе хуласенчи пĕтĕм общественноçă хăйсен шкулĕсене çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрлес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлес пулать. Шăхасан, Вăрмар, Шупашкар районĕсенчи чылай шкулсем çак ĕçе тата вĕсен коллективĕсем çакна тĕрĕс ăнланнă.

Вăрмар районĕнче уйрăм шкулсен çурчĕсене учительсемпе вĕренекенсем тата ялти ĕçхалăхĕн вăйĕпе, государство укçине расходламасăр юсаççĕ. Шăхаль вăтам шкулĕнчи учительсемпе вĕренекенсем вăйĕпе тырпул, пукансене тата сĕтелсене юсанă. Мăнçырма туллимар вăтам шкулĕн коллективĕ 10 класс пÿлĕмĕсене юсаса тăмпа шуратнă, çак ĕçшĕн 4000 тенкĕ расходламалла пулатчĕ. Çавăн пекех Кивĕ Вăрмар, Кавал шкулĕсен коллективĕсем те вĕренÿ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе мухтава тивĕç ĕçлеççĕ.

Вăрмар районĕнче шкулсем валли вутă хатĕрлесе турттарас ĕç çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхаççĕ. Шкул руководительсем ку тĕлĕшпе ялсоветсемпе, колхоз правленийĕсемпе тата ялти ĕçхалăхĕпе тачăлăн çыхăнса ĕçлеççĕ. Вутă хатĕрлесе турттарас ĕçе вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсем активлăн хутшăнна. Çапла вара паянхи кун тĕлне 2501 кубометр вутă хатĕрленĕ. Унти шкулсем вĕренекенсене 9501 кĕнеке сутăн илнĕ, вĕсене вĕренекенсене сутассипе организациленĕ.

Анчах вĕренÿ çулне хатĕрленес ĕç нумай районсенче питех те çÿрĕк пырать-ха. Комсомольски районра, сăмахран, шкул çурчĕсене юсама пуçламан та. Райцентрти вăтам шкул çуртне туса çитерес ĕçпе уйрăмах хăйсăр плотниксем мобилизациленĕ, плотниксем ĕçе йĕркеллĕ тухмаççĕ, çавăн пирки шкул çуртне тăвас ĕç вăраха тăсăлать. Чылай шкулсене вутă хатĕрлесе турттарса паман. Паянхи кун район пĕтĕмпе те 1567 кубометр çеç вутă хатĕрленĕ. Хĕл каçма пĕтĕмпе 5715 кубометр вутă кирлĕ. Ĕç çавăн пек япăх пыни райçутĕç пайĕн заведующийĕ Коновалова юлташа сахал хумхантарать пулас.

Çавăн пекех Элĕк, Красноармейски, Йĕпреç, Сĕнтĕр, Вăрнар районĕсенче те шкул çурчĕсене юсаса йĕркелеме тытăнман-ха.

Вĕренÿ çулне хатĕрленес ĕçе Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ тата унăн шкулсен пайĕ çителĕксĕр ертсе пыраççĕ.

Вĕренÿ пахалăхне кадрсем татса параççĕ. Çавăнпа шкулсем валли учительсем çителĕклĕ таран хатĕрлесси питех те пысăк вырăн йышăнать. Ку тĕлĕшпе ĕçсем япăх-ха.

Пуçламăш шкулсем валли çĕнĕрен 298 учитель кирлĕ пулать. Çан та, вĕсене курссемпе семинарсенче вĕрентеççĕ, анчах ку ĕçе [illegible]. 5-мĕшпе 7-мĕш классем валли çĕнĕрен 399 учитель кирлĕ. Педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă 44 учителе шкулсене ĕçлеме янă, анчах ытти [illegible]. 8-мĕшпе 10-мĕш классене вĕрентмелли 90 учитель çитмест. Уйрăмах историпе математикăна вĕрентекенсем çителĕксĕр.

РСФСР Çутĕç Халăх Комиссарĕ Потемкин юлташ çамрăк учительсене вĕрентсе хатĕрлеме кĕске вăхăтлă курссем-семинарсем ирттерме хушнă. Ку ĕçе республикăри хăшпĕр районсенче кăна пуçăннă-ха. Потемкин юлташăн приказĕ тăрăх, учительсене августăн 15-мĕшĕччен ĕçе вырнаçтарса çитермелле. Вăхăт сахал, ĕçе хăвăртлатас пулать.

Чăвашсен государство издательстви (управляющийĕ Золотов юлташ) тата Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи полиграфи промышленноçĕн управленийĕ (начальникĕ Моцицкий юлташ) шкулсем валли учебниксем вăхăтра кăларса памалла. Кăçал плана 29 учебник кăлармалла. Паянхи куна çитсе 9 учебник çеç пичетрен тухнă, 16 учебник производствăра хатĕрленсе пыраççĕ. Ытти 6 учебнике пичет валли те хатĕрлесе çитермен.

Учебниксене пичете хатĕрленĕ чухне ĕç сроксем тăсăлсах иртсе кайнă ĕнтĕ. Производствăна панă учебниксем те типографире, тĕрлĕ сăлтавсене пула, нумай вăхăт хушши пичетрен тухаймасăр выртаççĕ. Пĕрремĕш класс валли букварь, 6-мĕш класс валли физика учебникĕсен цинкографи начар ĕçленипе чăрăнса тăраççĕ. Анчах Моцицкий юлташ учебниксем кăларас ĕçе хăвăртлатма шутламасть.

Учебниксемпе вĕренÿ хатĕрĕсене, наглядлăх пособисемпе оборудованисене шкулсене çитерес тĕлĕшпе республикăри уйрăмĕ халĕ те тивĕçлĕ ĕçлемест-ха. Вырăнти промышленность тата промкооперации предприятийĕсемпе артельсем шкулсем валли вĕренÿ оборудованийĕпе наглядлăх пособисем кăларас ĕçе начар организациленĕ. Чăваш АССР Наркомторгĕ тата Россначсбыт [illegible] шкулсене кирлĕ [illegible] çитерес ĕçе пуçламан-ха.

Райçутĕç пайĕсен тата шкул директорĕсемпе заведующийĕсен вăйĕпе августăн 15-мĕшĕччен шкулсене тĕплĕн хатĕрлесе çитермелле.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ июнĕн 1-мĕшĕнчен 20-мĕшĕ хушшинче шкул ятти хатĕрленĕвне [illegible] çирĕплетнĕ. Çирĕмкунлăха лайăх организацилес, республикăри кашни шкул, ачасен интернатĕ тата çутĕç учрежденийĕ валли çителĕклĕ таранах вутă хатĕрлесе турттарса çитермелле. Çирĕмкунлăха организацилесе ирттерессишĕн районсенчи ВКП(б) райкомĕсем ответлă пулса тăраççĕ. Райçутĕç пайĕсем ку тĕлĕшпе уйрăмах çине тăрса ĕçлемелле. Сентябрĕн 1-мĕшĕччен çулталăкра кирлĕ вуттăн 40 процентне турттарса çитермелле.

ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе райçутĕç пайĕсене, шкулсен директорĕсемпе заведующийĕсене кулленех ертсе, ĕçлĕн пулăшса пымалла.

САРАТОВ

Саратоври Хĕрлĕ Ялавлă, Хĕрлĕ Çăлтăр орденлĕ, Совет Союз Геройĕ А. И. Лизюков генерал-майор ячĕпе тăракан 1-мĕш танковăй училищĕн начальникне полковника САФОНОВ юлташа

Саратоври Хĕрлĕ Ялавлă, Хĕрлĕ Çăлтăр орденлĕ, Совет Союз Геройĕ А. И. Лизюков генерал-майор ячĕпе тăракан 1-мĕш танковăй училищĕн командирĕсен, красноармеецĕсен тата вольнонаемнăй составне училище 25 çул тултарнă ятпа тата Правительствăн çапла награ- дисене илнĕ ятпа саламлатăп, танковăй войскăсен командирĕсен кадрĕсене хатĕрлес ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тума ырă сунатăп.

Оборона Халăх Комиссаре
Совет Союзĕн Маршалĕ
И. СТАЛИН.

Саратоври Хĕрлĕ Ялавлă 1-мĕш танковăй училище 25 çул тултарни

Саратоври Хĕрлĕ Ялавлă 1-мĕш танковăй училище 25 çул тултарчĕ. СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, танковăй войскăсем валли командирсен кадрĕсене хатĕрлес ĕçре питех те пысăк çитĕнÿсем тунăшăн тата Тăван çĕр-шывшăн чаплăн çапăçнăшăн, училищĕне Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ парса наградăланă тата ăна Совет Союз Геройĕн А. И. Лизюков генерал-майорăн ятне панă.

Училищĕри чылай работниксене орденсемпе медальсем парса на- [illegible] (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июлĕн 3-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Июлĕн 3-мĕшĕнче фронтра палла улшăнусем пулман.

Хура тинĕсре пирĕн карапсемпе авиаци тăшман шухăшне тата хăй тĕлĕнсе çÿрекен баржине путарнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн артиллери минометсенчен тата пăшалсемпе пулеметсенчен персе тăнă. Пирĕн чăссем гитлеровецсене пĕр вырăна кĕрсе кайма хăтланнă. Тăшман пĕр çине [illegible] пирĕн вĕлерсе пĕтернĕ, 6 пулемет пĕтерсе тăкнă, тата артиллерипе минометсен темиçе батарейине пусарса лартнă. Пĕр участокра, тăшман пирĕн оборона вырăнĕсенчен вырăна кĕрсе кайма хăтланнă. Тăшман разведчикĕсемпе мина участокне пырса кĕнĕ. Минăсем çурăлса кайнипе нимĕçсен пĕр пайĕ вилсе пĕтнĕ. Ытти гитлеровецсене вара пирĕн боевой хуралта тăракан боецсем пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе вĕлерне.

* * *

Белгород районĕнче пĕр чаçăн артиллерисчĕсем тăшман позицийĕсем çине темиçе хутчен вăйлăн пенĕ. Нимĕçсен пĕр орудине, 3 пулеметне тата груз тиенĕ 7 лавне пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 4 дзотне тата 5 наблюдательнăй пунктне çĕмĕрнĕ. Старши лейтенант Приблудня ертсе пыракан снайперсен ушкăнĕ кун каçа тăшманăн 14 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Лисичанск районĕнче пирĕн чаçсем разведка тунă тата тăшман çине артиллерипе минометсенчен персе тăнă. Пирĕн артиллеристсем тăшманăн персе тăракан точкисене пусарса лартнă. Пирĕн снайперсем 44 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн артиллери нимĕçсен 2 орудине, 5 пулеметне пĕтерсе тăкнă, 14 землянкине 6 наблюдательнăй пунктне сирпĕнтерсе янă. Старши сержант Анисов ертсе пыракан разведчиксем тăшман траншейине вăрттăн пырса кĕнĕ. Пирĕн боецсем 17 гитлеровеца вĕлернĕ те пĕр çухатусăрах хăйсен чаçне таврăннă. Тепĕр участокра Трошев лейтенант ертсе пыракан красноармеецсен ушкăнĕ 15 нимĕçе вĕлернĕ, 2 блиндажа сирпĕнтерсе янă, тăшмантан пĕр пулемет, темиçе автомат тытса илнĕ.

* * *

Орел облаçĕнчи пĕр районра кĕрешекен партизансен отрячĕ июнь пĕтеспе нимĕç захватчикĕсемпе хаяррăн çапăçнă. Партизансем тăшманăн 800 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Совет патриочĕсем 2 танкеткăна персе çĕмĕрнĕ, 12 автомашинăна сирпĕнтерсе янă. Трофейăсем тытса илнĕ. Орел облаçĕнче кĕрешекен тепĕр отрядри партизансен ушкăнĕ тăшман эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Пĕр паровоз тата боеприпассем тиенĕ 15 вагон çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Орел хулинчен кăнтаралларахра нимĕçсен 78-мĕш штурмовой дивизийĕнчен 4 салтак Хĕрлĕ Çар енне куçнă. Вĕсенчен пĕри, Антон Л. Ятлăскер, çапла каласа панă: „Пирĕн ротăра нимĕçсемсĕр пуçне 35 словенец, 6 поляк, Лотарингирен килнĕ 8 француз, 5 люксембуржец, 3 чех, 2 голландец тата пĕр бельгиец пулнă. Вĕсене пурне те Германи çарне ирĕксĕрлесе мобилизациленĕ. Хăратнă пулин те, словенецсем нумайĕшĕ призыв пункчĕсене пыман. Вĕсем партизансен отрячĕсене кайса, нимĕçсемпе çапăçаççĕ, ыттисем пытанса пураççĕ. Больфенг ялĕнчи тус Людвиг Лукон Германи çарне каймасăр юлнă. Гестаповецсем Лукона, унăн амăшне тата икĕ аппăшне тытнă та концлагере ăсатнă. Ирĕксĕрлесе илнипе нимĕç çарне лекнĕ словенецсем вырăссем енне куçасшăн. Пирĕн полкран пуçласа манăн земляк Франц куçрĕ. Темиçе кун иртсен эпир вăл радиопа каланине итлерĕмĕр. Вăл пире хăй пек тума чĕнчĕ. Тепĕр кунне эпир тăваттăн вырăссем енне куçрăмăр.

* * *

Нумаях пулмасть Ламбюсар хулинче (Бельгия) патриотсем пысăк çĕркăмрăк шахтине сирпĕнтерсе янă. Брюссель çывăхĕнче нимĕçсен çар эшелонне крушени пулнă. Крушение пула нумай гитлеровец вилнĕ е аманнă. Льежра Бельги патриочĕсем нимĕçсен зенитнăй батарейине тапăнса унăн çыннисене вĕлерсе пĕтернĕ, орудийĕсене юрăхсăра кăларнă.

Июлĕн 5-мĕшĕнчи ирхи пелтерÿ

Июлĕн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă улшăнусем те пулман.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн разведка тăвакан ушкăн тăшман тăракан вырăна вăрттăн кĕрсе кайнă та пĕр траншейăра ларакан нимĕçсем çине гранатăсем варкăнтарнă.

* * *

Тепĕр участокра нимĕçсен разведка тăвакан отрячĕ пирĕн оборонăн малти участокне кĕрсе кайма хăтланнă. Тăшман разведчикĕсене вăхăтра асăрханă. Пирĕн боецсем пулеметсемпе тата винтовкăсемпе персе, темиçе вунă гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Белгород районĕнче пирĕн разведчиксем нимĕçсен малти участокĕнче тăшман пехоти пире атакăламашкăн пĕр çĕре пуçтаранниiне асăрханă. Çĕрле минометсен гвардейски подразделенийĕ гитлеровецсен çав ушкăнĕ çине сасартăк вăйлăн пеме тытăннă. Тăшман пысăк çухатусем тÿснĕ. Çапла вара тăшман атакине пăчлантарса лартнă.

* * *

Чугуевран çурçĕтерехре тăшманăн хăй тĕллĕн çÿрекен 2 туппи пирĕн позицисем çине пенĕ. Пĕр чаçăн артиллерисчĕсем, хирĕç персе, тăшманăн çав орудийĕсене пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра совет минометчикĕсем 2 станковăй пулемет пĕтерсе тăкнă. Тăшман пехотин пĕр ротине сапаласа янă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре орудие командирĕ старши сержант Верещагин çĕрле тăшман дзочĕсемпе блиндажĕсем çине пеме тытăннă. Ирхине разведчиксем çапла пĕлтернĕ: артиллеристсем нимĕçсен 2 дзотне, 4 блиндажне ишсе антарнă, тенĕ. Тепĕр участокра пĕр подразделенин боевой хуралĕ, пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе, пирĕн пралук карса тухнă вырăн урлă каçма хăтланнă нимĕç разведчикĕсен отрядне сапаласа янă.

* * *

Ленинград облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен пысăк карательнăй экспедицийĕпе темиçе кун хушши хаяррăн çапăçнă. Нимĕçсем партизансене çавăрса илсе пĕтерсе тăкма хăтланни пăчланса ларнă. Уйрăм кунсенче совет патриочĕсем тăшманăн темиçешер атакине сирсе янă, ăна хирĕç пыра-пыра çапнă. 250 салтакпа офицер вилсе выртсан, нимĕçсем каялла чакнă. Ленинград облаçĕнчи тепĕр отрядри партизансен ушкăнĕ нимĕçсен çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Крушение пула пĕр паровоз тата 4 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Партизансен тепĕр ушкăнĕ шоссе çулĕ çинче тăшманăн çăмăл машинине пĕтерсе тăкнă. Контрразведка группин командирĕ вилнĕ, нимĕçсен хăйне уйрăм службин руководителĕ йывăр аманнă.

* * *

Фронтăн пĕр участокĕнче румынсен 1-мĕш истребительнăй флотилийĕн капитанне Октава Пенескуна тыткăна илнĕ. Пенеску çапла каласа панă: „Вăрçăн икĕ çулталăкĕ хушшинче Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче Румыния хăйĕн пĕтĕм авиацине тенĕ пекех çухатрĕ. Тĕрĕс ĕнтĕ, Румынин сывлăш—çар вăйĕсен составĕнче авиацин 9 флотилийĕ шутланса тăрать, анчах та вĕсене самолетсем çителĕклĕ паман. Румыни завочĕсем кивелнĕ йышши самолетсемпе моторсем кăларса тăраççĕ, вĕсене те пулин питĕ сахал туса кăлараççĕ. Румыни авиацине тĕрлĕ хатĕрсем парса тăрасси пĕтĕмĕшпех Германирен килет. Нимĕçсем пире çав япаласене парса тăрасшăн мар, вĕсем çапла калаççĕ: самолетсем пире хамăра та çитмеççĕ,—теççĕ. Вĕсем пирĕн çĕршыва çаплах тустараççĕ, кирлĕ япаласене пурне те илсе каяççĕ. Халăх нимĕçсене тăшманла пăхать, çынсем питĕ нумай вилнишĕн вĕсем айăплă тесе шутлать. Халăхăн тата салтаксен пысăк пайĕ Германипе союзлă пулнине хирĕç тата Румыния малашне вăрçассине хирĕç тăраççĕ.

* * *

Марсельре француз патриочĕсем нимĕç казармине сирпĕнтерсе янă. Взрыв пулнипе 80 гитлеровец вилнĕ е аманнă. Тулуза çывăхĕнче ирĕклĕ стрелоксем нимĕç автоколоннине тапăннă, 20 нимĕç салтакне вĕлернĕ, груз тиенĕ 11 автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Тури Савойăра хĕçпăшаллă французсен ушкăнĕ пĕр çар складне кĕрсе кайнă та, унăн хуралне вĕлерсе пĕтерсе, темиçе пулемет тытса илнĕ. Каяс умĕн патриотсем çав склада вут тĕртнĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Кĕрешекен Францин „Нормандия“ ятлă çар чаçĕнчи офицерсене орденсемпе наградăласси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿре Совет командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çав ĕçре паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн çаксене наградăлас:

Отечественнăй вăрçăн 1-мĕш степеньлĕ орденĕпе:

1. Тюлян Жан Луи майора
2. Литольф Альберт капитана.

Отечественнăй вăрçăн 2-мĕш степеньлĕ орденĕпе:

1. Дюран Альберт лейтенанта
2. Лефевер Марсель лейтенанта
3. Дюпро Луи аджюдан-шефа

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1943 çулхи июлĕн 2-мĕшĕ.

Пирĕн авиаци Керче, Тамане тата Сеннаяна тапăнни

Июлĕн 1-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тата июлĕн 2-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Керчь, Тамань, Сенная (Темрюкран 30 километр хĕвеланăçнерехре) порчĕсене тапăннă. Тăшманăн çав портсенче тăракан суднисем çине, склачĕсем çине тата пĕр çĕре пуçтарăнса тăнă нимĕç войскисем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине пула пушарсем тухнă, взрывсем пулнă. Çакна асăрханă: бомбăсем суднăсем çине тата суднăсемпе юнашарах ÿкнĕ, вара темиçе судно шыва путнă, ыттисем чылаях сиенленнĕ. Пирĕн самолетсем пурте хăйсен аэродромĕсене таврăннă.

Выльăх-чĕрлĕх валли—çителĕклĕ апат

СОВЕТСКОЕ, июлĕн 3-мĕшĕ. Отечественнăй вăрçă участникĕ Г. Васильев ертсе пыракан Çуткÿльри «Восход» колхоз обществăллă вылăх-чĕрлĕх хĕл каçарма апат хатĕрлет. Ирçĕ кунсенче колхозниксем 35 гектар çинчи утта типтерлĕн çулса кĕртрĕç. Ку ĕçре уйрăмах 2-мĕшпе 3-мĕш бригадăсем малта пычĕç.

Як. Çигаĕ.

Çĕнĕ вăй-хăватпа

Ленин ячĕпе тăракан фабрика темиçе уйăх хушши йĕркеллĕ ĕçлеймен. Производство программине виçĕ уйăх хушшинче çуррине яхăн çеç тултарса пынă.

Фабрика коллективĕ июнь уйăхĕнче хăйĕн умне боевой задача лартнă: кашни рабочине работницăн задание 300—400 процент тултармалла. Çак лозунгпа ĕçленĕ вăл иртнĕ уйăхра.

Столярова юлташ ертсе пыракан бригада ăмăртура мала тухрĕ. Хрисанова, Маркелова, Петрова работницăсем кулленхи задание 300—370 процент таран пурнăçласа пычĕç. Полякова юлташ начальник пулса ĕçлекен цех та задание 300 процента яхăн тултарчĕ. Çак цехра ĕçлекен Канер юлташ ĕç планне 412 процент пурнăçларĕ.

Çĕвĕ çĕлекен цех июнь уйăхĕнчи задание 350 процент тултарса, 150 комплект кĕпе-йĕмлĕх пир-авăр перекетлесе хăварчĕ.

Горбунова юлташ ертсе пыракан цехра пурте çамрăк хĕрачасем. Горбунова юлташ 22 çамрăк хĕрачана çĕвĕ çĕлеме вĕрентнĕ. Вĕсенчен Катя Сергеева, Аня Сергеева, Ганина работницăсем ĕç нормине 180 процент тултараççĕ. Юлашки вăхăтра фабрикăра задание тултармасăр ĕçлекен работницăсем пачах çук.

А. ЧИРКОВА.

Çулсене юсамалли уйăхлăх

Çулсем юсас ĕçе вăйсăрлатрĕç

Çулйĕрсене юсас ĕç юлашки вăхăтра йăвашланса пычĕ. Уйăхлăхăн малтанхи кунĕсенче малта пынă районсем те кая юлма пуçларĕç. Ишлей, Комсомольски, Шупашкар районĕсенче ик-виçĕ кун ĕнтĕ ĕç пĕр улшăнусăр пырать. Шăмăршă, Кувакино, Хĕрлĕ Чутай, Канаш, Пăрачкав районĕсем ку ĕçре республикăна каялла туртаççĕ. Канаш районĕ (райсовет исполкомĕн председателĕ Антонов) уйăхлăхри графика июлĕн 3-мĕшĕ тĕлне 20 процент кăна пурнăçланă. Çулйĕр ĕçĕнче кунта куллен 125 çын ĕçлемелле пулсан, паянхи куна 35 çын çеç ĕçлет. Вĕсем те графика тултарса пыраймаççĕ. Асăннă районсенче çулйĕр ĕçĕ юлса пыни ĕç вăйĕ çителĕксĕр панинчен килет. Кувакино районĕнчи колхозсенче утă çулакансем валли столовăйсем организациленĕ. Çав вăхăтрах çулйĕр ĕçĕнче ĕçлекенсем патне вăхăтра апат-çимĕç тăратмаççĕ. Çавна пула ĕçлекенсем час-часах киле çÿреççĕ.

ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен çулйĕр ĕçĕшĕн хăйсем ответлă пулнине ăнланмалла, уйăхлăхри графика пурнăçлассишĕн çине тăрса тăрăшмалла. Ку ĕçре Етĕрнĕ, Елчĕк районĕсенчен пример илмелле.

Мĕншĕн графика пурнăçламаççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Районри „Восток“, „Первое мая“, „Заря“ тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем çулйĕр ĕçĕн заданине пĕтĕмĕшпех пурнăçларĕç. Июлĕн 3-мĕшĕ тĕлне район уйăхлăх заданине çĕр чавас енĕпе 90 процент, чул кăларас енĕпе 50 процент пурнăçларĕ. Йывăç хатĕрлемелли плана пĕтĕмĕшпех тултарчĕ. „Красный Волгарь“, Сталин ячĕпе тăракан колхозсем уйăхлăхри задание 30 процентран мала тултарайман. „Красный Волгарь“ колхозăн (председателĕ Шмелев) çулйĕр ĕçĕнче çуран 25 çын ĕçлемелле, паянхи кунччен 10 çын çеç ĕçлесе пычĕ. Колхоз председателĕсен çулйĕр ĕçне çынсем ямасăр тăмалла мар. Çак кĕске вăхăт хушшинче кашни колхозăн çулйĕр ĕçĕн заданине пурнăçламалла.

А. МОРЯКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Задание срокчен тултарчĕç

ИШЛЕЙ. Июлĕн 3-мĕшĕ (Телефонпа). Район чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлемелли плана 140 процент, турттармалли плана 136,4 процент пурнăçларĕ. „Красный флот“, „Прожектор“, „Активист“ колхозсем вутă хатĕрлемелли задание срокченех тата ытлашшипех тултарчĕç. Вăрманта уйрăмах „Прожектор“ колхозран Е. Горшков, „Красный флот“ колхозран А. Малов, „Родина“ колхозран Агафия Кириллова юлташсем тăрăшса ĕçлерĕç. Вĕсем хăйсен заданийĕсене кашни кунах ирттерсе тултарса пычĕç.

Г. ЛАЗАРЕВ.

Хурт-хăмăр ĕрчетес ĕçе лайăхлатма пулчĕç

ШĂХАСАН. (Хамăр корр.). Çак кунсенче хурт-хăмăр ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта райçĕрĕç пайĕн хурт-хăмăр ĕрчетес енĕпе ĕçлекен инструкторĕ Г. Кузьмин юлташ ку ĕçри çитменлĕхсемпе малашнехи задачăсем çинчен доклад туса пачĕ.

Канашлура ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Н. Матвеев юлташ тата райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ И. Белорусов юлташ районри хăшпĕр колхозсенче хурт-хăмăр ĕрчетес ĕç çине çиелтен пăхни çинчен, çак ĕçе малашне лайăхлатма кирли çинчен тĕплĕн каласа пачĕç.

Нумай колхозсенче хурт-хăмăр ĕрчетес ĕçе аван туса пыраççĕ. «Березовка» колхозри М. Иванова пыл хурчĕсене 80 çемье пăхать. Вăл хăй ĕçне юратса тăвать. «Орешино» колхозри Г. Сидоров юлташ хăй пĕччен 151 вĕлле, Шуркассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри Л. Кондратьев — 70 вĕлле, «Ударник» колхозри В. Иванов—158 вĕлле пыл хурчĕсене пăхаççĕ.

Анчах та «Новый путь», «Чăваш ЦИК», Калинин ячĕпе тăракан колхозсенче пыл хурчĕсем ĕрчетес ĕçе тивĕçлипе туса пыманнине пула вĕсем нумайĕшĕ вилсе пĕтеççĕ, тупăш та сахал параççĕ. «Новый путь» колхозра (хуртхăмăр пăхаканĕ И. Волков) кăçал пыл хурчĕсене 12 çемьене, Калинин ячĕпе тăракан колхозра (пчеловод Н. Леонтьева) 5 çемьене вĕлерсе пĕтернĕ.

Хурт-хăмăр ĕрчетес тĕлĕшпе кашни колхозра [illegible] ĕçлесе [illegible].

В. ВЕСЕЛОВ.

Ехремкассинчи „Майăн 1-мĕшĕ" колхозăн 1943 çулта тырпулсене пухса кĕртмелли примерлă ĔÇ ПЛАНĔ

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, „Майăн 1-мĕшĕ" колхоз членĕсем çакнашкал обязательствăсем илнĕ: гектартан 13 центнертан кая мар тĕштырă, 120 центнер çĕрулми, 130 центнер пахча-çимĕç, 4,5 центнер кантăр вăрри тата 3,9 центнер сӳс туса илмелле. Фронтпа тăван çĕршыва тата çимĕç ытларах хатĕрлесе парас тесе, колхозниксемпе колхозницăсем ялхуçалăх ĕçĕсен пĕрремĕш тапхăрне—суракине ăнăçлăн ирттерчĕç. Тырпулсене кăçал тухăçлă пулчĕ, çак тырпулсене кĕске вăхăтра, пĕр тăккаламасăр пухса кĕртес тĕллевпе ĕçсене çапла ирттерме планлатпăр:

I. Пĕрчĕллĕ тырăсене вырса пуçтарасси

1) Ĕçсен хисепĕ тата срокĕсем

Культурăсен ячĕсем	Мĕçе гектар	Мĕнле вырса пухмалла (гектарпа): Жнейкăпа вырмалла	Кĕрепеллĕ çавасемпе сулмалла	Сурлапа вырмалла	Комбайнпа вырса пухмалла	Пĕтĕмпе миçе кун хушшинче вырса пĕтермелле
Ыраш	97,0	30	—	31	23	8
Кĕрхи тулă						
Сĕлĕ	69,15	25,15	8,0	16	20,0	5
Çурхи тулă	10,0	10,0	—	—	—	1,5
Урпа	3,0	—	3,0	—	—	2,0
Пăри	3,0	3,0	—	—	—	1,0
Хуратул	1,0	1,0	—	—	—	1,0
Вир	4,0	—	—	4,0	—	1,5
Пăрçа	17,0	—	17,0	—	—	2,0
Ясмăк	6,0	—	6,0	—	—	1,0
Пĕтĕмпе	211,15	69,15	34,0	65,0	43,0	22,5

2) Ĕç вăйне вырнаçтарни тата нормăсем

Тырпулсене пухса кĕртес ĕçе 74 çын (вĕсенчен подросток—11), 45 лаша, 4 жнейка çирĕплетнĕ.

Бригадăсем, звеносем	Ĕçсен ячĕсем	Камсен тумалла	Норма: Пĕр кунта тумалла	Пĕтĕмпе тивет пĕр пуçне
1—2 бр.	Жнейкăпа тырă вырасси	Роман Капитонов—машиновед	5 га	69,15
1 зв.	Машина хыççăн кĕлте çыхасси	А. Клементьева, Т. Платонова, П. Платонова, Х. Исакова, М. Быкова, Е. Менкова, З. Демидова, В. Николаева, Х. Алексеева, Ф. Маркова	0,50	6,91
2 зв.	Çулакансем (кĕрепеллĕ çавапа)	М. Яковлева, Е. Никитина, М. Титова, А. Данилова, У. Архипова, А. Михайлова	0,25	5,66
3 зв.	Çава хыççăн çыхакансем	А. Сидорова, Н. Сорокина, Е. Елисеева, В. Пыркина, В. Антонова, А. Терентьева	0,25	5,66
4—5 зв.	Алăпа тырă вырасси	Подростоксемпе пĕрле—40 çын	0,10	1,0?

II. Кĕлте кĕртесси, авăн çапасси

1) Кĕрхи тырăсене вырма тухнă хыççăн 6-мĕш кунĕнче çак колхозниксем кĕлте турттарма пуçлаççĕ: Е. Павлов, М. Горшков, Н. Марков, А. Лисин, П. Николаева. Калан тăвакансем: И. Тарасов, В. Капитонов, И. Семенов.

Тырпулсене вырса пухнă хыççăн 10 кунран кая хăвармасăр кĕлтесене капана хывса пĕтермелле.

2) Тыра вырма тухнă хыççăн 6-мĕш кунĕнче, алăпа тырă выракансенчен 10 çын уйăрса, авăн çапма тытăнмалла. Ноябрĕн 1-мĕшĕччен пĕтĕм авăна çапса тирпейлемелле.

3) Вăрлăхлăх акнă участоксене (пĕтĕмпе 30,40 гектар) уйрăм пухса кĕртсе çапмалла, тыррисене уйрăм складсене хумалла. Вăрлăх участокĕсене пухса кĕртме çаксенчен звено тăвас: И. Никифорова, (звеновод), О. Сидорова, О. Сорокина, М. Кузьмина, Т. Алексеева, А. Михайлова, Е. Семенова, Е. Герасимова, В. Золова, А. Горшкова, И. Мышкина, Т. Иванова.

III. Государствăна тырпул парасси

1) Тырă вырма тухнă хыççăн 7-мĕш кунĕнчен государствăна тырă леçме тытăнмалла. Октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне государствăна пур культурăсемпе те тырпул парса татмалла

2) Государствăна тырпул леçмешкĕн çак çынсенчен яланлăх транспорт бригади тăвас: А. Степанова, И. Лукина, А. Федорова, Е. Путерова (бригадир).

IV. Ĕçе организацилесси

1) Тырпулсене пухса кĕртнĕ вăхăтра колхозра пĕрлешӳллĕ столовăй тата ачасен ясли уçас. Столовăйра ĕçлеме çаксене уйăрас: М. Числова, М. Кузьмина, Н. Путеров (заведующийĕ). Яслинче ĕçлеме—В. И. Иванова (заведующи), З. Петрова, Николаева колхозницăсене уйăрас.

2) Уборка вăхăтĕнче ĕçкунĕн йĕркине çапла тăвас: ĕçе 3 сехетре тухса, каçхине 10 сехетре пăрахмалла; ирхи тата каçхи апат çиме—пĕрер сехет, кăнтăрлахи апат çиме 3 сехет хушши кану парас, апатсене уйра çимелле тăвас.

3) Пур ĕçе те индивидуальнăй сдельщинăпа тумалла; кашни кунхи ĕçе бригадир колхозниксенчен ĕçĕн пахалăхне пăхса йышăнать, бригадирсенчен правлени председателĕ, пахалăх инспекторĕпе пĕрле, акт çырса йышăнать.

V. Агитациллĕ-массăлă ĕçсем

Ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлес сишĕн Куракăшри „Безбожник" колхоза социализмлă ăмăртăва чĕнес. Çавнашкалах, бригадăпа бригада, звенопа звено тата уйрăм колхозниксем хушшинче ăмăрту сарса ямалла. Бригадăсен, звеносен, пĕтĕм колхозăн кулленхи ĕçĕсене кăтарту хăми çине çырса пырас, малта пыракан бригадăпа звеносене палăртмашкăн колхозра куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялав тăвас.

Колхозниксемпе политикăллă калаçусем ирттерме, вĕсене хаçатсем вуласа кăтартма çак агитаторсене çирĕплетес: А. Леонтьев, Р. Вязовкина, В. Иванова, М. Петрова В. Нестерова. Редколлеги членĕсене кашни 3 кунта пĕрре стена хаçачĕсем кăларма хушас.

Уборка вăхăтĕнче ĕçе тухман е сăлтавсăрах кая юлса тухакан колхозниксене, уркенсе ĕçленипе кулленхи нормăна тултарманнисене çийĕнчех ответ тыттармалла.

Çак плана июнĕн 28-мĕшĕнче колхозниксен пĕрлешӳллĕ пухăвĕнче çирĕплетнĕ.

Колхоз председателĕ М. ВЯЗОВКИНА,
Счетовод А. ФАДЕЕВ.

(Элĕк районĕнчи „Колхоз хаçатĕнчен")

Çапла хатĕрленмелле

Ямажкассинчи (Канаш районĕ) Доровиа ячĕпе тăракан колхозăн уйхирĕнче пуян тырпул çитĕнсе, ешĕрсе ларать. Колхозниксем ăна çирĕп сыхлаççĕ. Уйхир хуралçисем яланах хăйсен постĕнче тăраççĕ.

Акă уборка пуçланать. Ку ĕç вăл кĕске вăхăт хушшинче тумалли ĕç. Çавăнпа та колхоз тырпула уйхиртен хăвăртрах та пĕр тăкаксăр пухса кĕртме хĕрсех хатĕрленет.

Жнейкăсене юсанă. Васкасах молотилкăсене юсаççĕ, итемсене тасатма хатĕрленеççĕ. Транспорт инвентарĕсем хатĕр. Колхозăн кăçал 650 гектар çĕр çинчен тырпул пухса кĕртессине кашни колхозник аван пĕлсе тăрать.

Çапла, çирĕплетнĕ план тăрăх ку колхоз кĕрхи тырăсене 6 кун хушшинче, çурхи тырăсене 10 кун хушшинче пухса кĕртмелле. Колхозниксен ĕçне тĕрĕс организацилес шутпа колхоз уборка вăхăтĕнче ятарласа столовăй уçать. ачасен яслийĕ пулать.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Ӳкерчĕк çинче: Нимĕçсемпе 1914—18 çулсенче вăрçăра вăрçнă ватă артиллерист, Георги орденĕн пур степенĕсен те кавалерĕ, халĕ «Политотдел» колхозăн бригадирĕ А. М. Шамриха юлташ фронтри пĕр чаçа пынă. Вăл гвардеецсемпе артиллеристсене хăй ĕлĕк нимĕçсене мĕнле çĕмĕрни çинчен каласа кăтартать.
Д. ФАВИЛОВИЧ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Летчиксем совет ачисене нимĕç тылĕнчен илсе килеççĕ

Çутă июнь каçĕ. Фронт çывăхĕнчи аэродромсенчен пĕринче виçĕ „У—2" самолет инçе çула вĕçсе кайма хатĕрленеççĕ. Кабинăсене боеприпассем тиеççĕ. Пурне те хатĕрлесе çитернĕ хыççăн самолетсем, çĕкленсе, хĕвеланăçнелле, партизансем патнелле çул тытаççĕ.

„У—2" йышши машинăсемпе çĕрле вĕçме шиклĕ. Противник тылĕнче вĕсен вăйлă тăшман пур: нимĕçсен каçхи истребителĕсем, прожектор станцийĕсем тата зенитнăй батарейĕсем. Аэродром çинче летчиксем каялла таврăнасса тӳсеймесĕр кĕтсе тăраççĕ.

Пуринчен малтан аслă лейтенант Мельков вĕçсе таврăнать. Унăн самолечĕ çинче икĕ пĕчĕк пассажир—Любăпа Валя пур. Мельков хыççăн вĕçсе çитнĕ Алехин лейтенант хăйпе пĕрле Петя ятлă 11 çулхи тата Сима ятлă 6 çулхи ачасене илсе килчĕ. Юлашкинчен Федоров лейтенант вĕçсе таврăнчĕ. Вăл та икĕ ачана—аппăшĕпе шăллĕне—сичĕ çулхи Райăна тата пилĕк çулхи Костьăна илсе килчĕ.

Ачасем летчиксене фашистсем вăхăтлăха йышăнса илнĕ Совет çĕршывĕнчи гитлерла влаçăн тискер ĕçĕсем çинчен каласа параççĕ. Совет летчикĕсем илсе килнĕ ачасен ашшĕ-амăшĕсене тата çывăх тăванĕсене нимĕçсем каторга ĕçĕсене тума Германие хăваласа кайнă. Тăлăх ачасене партизансем çăлса хăварнă. Пĕр вăхăт хушши ачасем партизансем патĕнче лагерьте пурăннă, унтан вара вĕсене самолетсемпе „аслă çĕр çине" ăсатнă.

Çак аэродромри кашни летчиках партизансем выçă вилĕмрен çăлнă ачасене тăшман тылĕнчен темиçе вунă ача илсе килнĕ.

К. ПУХОВ.
ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (ТАСС спецкорĕ).

Калинино районĕнчи ялсовечĕсем пек ĕçлемелле

Калинино районĕнчи ялсовет исполкомĕсем уйри тырпула пухса кĕртме тĕплĕн хатĕрленеççĕ. Колхозсем 1942 çулхи тырпула ăнăçлăн пухса кĕртрĕç, государствăна тырпул вăхăтра парса татрĕç. Çак ĕçре ялсовет исполкомĕсем те сахал мар ĕçленĕ. Калинино районĕ суракине те ăнăçлăн вĕçлерĕ.

Ялсовечĕсемпе колхозсен паянхи задачи — акса хăварнă тырпула лайăх пăхса ӳстерсе, ăна пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕртесси пулать. Калинин юлташ „Чăваш Коммуни" хаçатра 1942 çулхи августăн 6-мĕшĕнче пичетленнĕ çырăвĕнче ялсовет исполкомĕсен председателĕсене çапла каланăччĕ: „Председатель юлташсем, сирĕн çĕршыв умĕнчи тивĕçлĕх — тырпула пухса кĕртме вăхăтра организацилесси, пур ĕçлеме пултаракан çынсене те уборкăна хутшăнтарасси... Тырпула лайăх пуçтарса кĕртни, апат-çимĕç продукчĕсене те типтерлĕ тыткалани фашистла бандăна хирĕç пыракан вăрçăра çĕнтерӳ тума пулăшни пулать. Тырпула пухса кĕртесси вăл — фронтри çапăçăвах", тесе çырнăччĕ. Çак кăтартусене асра тытса, малта пыракан Айкăш ялсовечĕ (председателĕ Ананьев), Хăмăш ялсовечĕ (председателĕ ЧАССР Верховный Совет депутачĕ Полякова) тырпула пухса кĕртме тивĕçлипе хатĕрленеççĕ. Вĕсем колхозсене ертсе пырас ĕçре пысăк çитĕнӳсем турĕç. Тырпулсене пĕр хут çумласа тухнă, хăшпĕр вырăнсене иккĕмĕш хут çумлаççĕ. Утă çулса государствăна парас ĕçе пуçланă, пĕтĕм ялхуçалăх машинисене юсанă, çурласене шăлласа, çавасене туптаса хунă, кĕрепеллĕ çавасем тунă. Жнейкăпа ĕçлеме вĕрентсе хатĕрленĕ. Хăмăш ялсоветне кĕрекен Услапа, Кăмпал колхозĕсем, Айкăш ялсоветĕнчи хăшпĕр колхозсем те пĕрлешсе апатланма тата яслисем валли продуктсем çителĕклĕ хатĕрлесе хунă. Агитациллĕ-массăллă ĕçе туса пыма учительсенчен агитаторсем уйăрса çирĕплетнĕ. Айкăш ялсовечĕ Сăкăт-Торбиково ялсовечĕпе ăмăртать. Çав ялсоветĕнчи колхозсем те, пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе, ăмăртура мала тухассишĕн кĕрешеççĕ. Тырпула уйран пухса кĕртес енĕпе пуринчен ытла услапари колхоз председателĕ Федоров юлташ тăрăшса ĕçлет. Уборка машинисене хатĕрлесе çитернипе пĕрлех вăл çурласем, çавасем, лаша кӳлмелли хатĕрсемпе урапасем çителĕклĕ таран юсанă е çĕнĕрен туса хатĕрленĕ. Халĕ итемсене тасатса йĕркене кӳрет, амбарсене хатĕрлет. Колхозниксем уборка вăхăтĕнче кам мĕн ĕçлемеллине çирĕп пĕлсе тăраççĕ.

М. ПРОХОРОВ.

Уборка вăхăтĕнче пушарпа кĕрешесси

Сĕнтĕр районĕнчи «Свобода», «Авангард», «Çĕнĕ çул», «Сеялка», «КИМ» тата ытти колхозсем те пушартан сыхланас ĕçе лайăх организациленĕ. Вĕсенче пушарпа кĕрешмелли правилăсене тĕплĕн пăхăнса ĕçлеççĕ.

«Сеялка» колхозра ирĕклĕ дружина начальникĕ пулса отечественнăй вăрçă участникĕ Г. Ильин юлташ ĕçлет. Çак колхозра кăмакасене 1943 çулта икĕ хутчен тĕрĕсленĕ, 4 пĕве пĕвеленĕ. Дружина начальникĕ каçхине ял хушшинче, тырă амбарĕсем патĕнчи хуралçăсене ялан тĕрĕслесе тăрать.

Часах тырпула пухса кĕртес ĕç пуçланать. Çак вăхăтра ялсенче, уйхирте лашасемпе тата çуран пăхса çӳрекен дозорсем уйăрмалла. Колхоз итемĕсене тасатса çитерсе, молотилка йĕри-тавра 3 метр сарлакăш сухаласа çавăрăнмалла. Итем таврашĕнче табак туртмалли вырăнсем тумалла. Унтах каткапичкесемпе шыв, насоссем, хăйăр, кĕреçе пулмалла. Хăвăрт вут тивекен япаласем (бензин, краççын) колхоз тырпулĕнчен 100 метр аякра лармалла. Çак правилăсене «Авангард», «Çĕнĕ çул», «Сеялка», «КИМ» колхозсем чылай çулсем хушши пĕр пăркаланмасăр тытса пыраççĕ.

Анчах та пушартан сыхланас ĕçе пур çĕрте те тивĕçлипе организацилемен. Районра 1943 çулăн пилĕк уйăхĕ хушшинче пушарсем чылай пулкаларĕç. Çав пушарсем государствăна 11.000 тенкĕлĕх сиен кӳнĕ.

Калайкассинчи «Марксист» колхозра пожарнăй депо çурчĕ пур, анчах унпа усă курман, насос витере тăнă. Насос урапин малти тĕнĕлĕсене урăх ĕçре усă курнă. Шыв пичкисем пушă ларнине пула типсе шултăркаса кайнă. Колхоз пушара хирĕç кĕрешме лаша та уйăрса паман пулнă. Çак ĕçе тивĕçлипе организацилейменшĕн колхоз председательне Г. Горланова Сĕнтĕр районĕнчи НКВД отделенийĕ штраф тунă. Шатракасси ялсоветĕнчи «Наука» колхозри пушар дружинин начальникĕ П. Чернов та пожарнăй сарайне тасамар тытнă. Насоса юрăхсăра кăларнă. Çакăншăн Чернова та штраф тӳлеттернĕ.

Уйри тырпула пухса кĕрес ĕçсем пуçланнă тĕле пушара хирĕç кĕрешессине пур колхозсем те йĕркелесе çитермелле. Пуян тырпула ăнсăртран тухакан инкексенчен сыхламалла.

М. ИСАЕВ,

Сĕнтĕр районĕнчи НКВД отделĕн пушартан сыхланас енĕпе ĕçлекен инспекторĕ.

Ют çĕршывсенче

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, июлĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: июлĕн 1-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен бомбардировщикĕсем Кальярири (Сардиния) казармăсемпе чугунçул станцине тапăннă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, акăлчансен истребительнăй авиацийĕн самолечĕсем июлĕн 1-мĕшĕнче Гук фан Голланд сăмсахĕ çывăхĕнче (Голландия) тăшманăн суту-илӳ суднисене атакăланă тата тăшман суднисен караванне хӳтĕлесе пыракан караппа çапăçнă. Тăшманăн суту-илӳ суднине тата 4 миннăй тральщикне сиенленĕ.

ЛОНДОН, июлĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: июлĕн 2-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен бомбардировщикĕсем Сицилипе Сардини утравĕсене тапăннă.

Çав вăхăтрах Кăнтăр Италири Леччери тата Гротталиори аэродромĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Чылай об'ектсем çине бомбăсем тӳрремĕнех пырса ӳкнĕ. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 12 истребительне персе ӳкернĕ.

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, нумаях пулмасть Италирен Стамбула пынă çынсем çапла каласа кăтартнă: союзниксен авиацийĕ вĕçсе пырса бомбăсем пăрахнине пула Неапольре ишĕлмен çуртйĕр питех те сахал юлнă. Пĕррехинче войскăсем турттарса пыракан транспорта пысăк çухатусем кӳнĕ. Неаполь çывăхĕнче 5 суднăна шыва путарнă. Çав суднăсем çинче тăшманăн 8 пин салтакĕ пулнă.

ЛĂПКĂ ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, июлĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: июнĕн 30-мĕшĕнче ирхине Рендов утравĕ çине пырса аннă американецсен войскисем çав утрава çав кун каç пуличченех йышăнса илнĕ, японецсен гарнизонне вĕлерсе пĕтернĕ. Союзниксен шыв çинчи суднисем тата пикировка тăвакан бомбардировщикĕсем японецсен Коломбангара утравĕ çинчи Вилари тата Çĕнĕ Георги çинчи Мундари базисем çине пенĕ. Америкăн шыв çинчи флочĕн ытти соединенийĕсем Баллале—Файси утравĕсен районĕнчи японецсен позицийĕсем çине пенĕ. Япони авиацийĕ кун каçа нумай хутчен контратакăсем тунă. Çав контратакăсем вăхăтĕнче пулса иртнĕ сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери пенипе японецсен 101 самолетне персе ӳкернĕ. Союзниксен авиацийĕн 17 самолет пĕтнĕ.

Нассау заливĕнче (Çĕнĕ Гвинея) союзниксен войскисем, малтан хатĕрлесе хунă план тăрăх хăйсен позицийĕсене çирĕплетнĕ. Союзниксен авиацийĕ типçĕр çинчи войскăсемпе çирĕп çыхăну тытнă, вĕсемпе пĕрле Япони оборонин линийĕсене атакăланă.

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). США-н тинĕс-çар ĕçĕсен министерстви çапла пĕлтерет: Çĕнĕ Георги утравĕ çине пырса аннă Америка войскисем Мунда çывăхĕнчи Виру гаваньне йышăннă.

ФАШИСТЛА ИТАЛИН ШАЛТИ ЙЫВĂРЛĂХĔСЕМ ÇИВĔЧЛЕНСЕ ПЫНИ

СТАМБУЛ, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Итальянецсен хаçат-журналĕсенче шалти йывăрлăхсем çивĕчленсе пыни çинчен калакан статьясем нумай пичетленеççĕ. „Шалти фронт пăсăлнăçемĕн пăсăлса, шанчăксăра тухса пынине" хаçатсем текех пытарса тăма пултараймаççĕ, „Пополо д"Италиа". хаçат çапла çырать: „Итали çĕршывĕнче шалта та вăрçă пырать... Анчах шалти фронтра отступлени пулма пултараймасть, мĕншĕн тесен шалти фронт хавшасан, государство ишĕлсе анать". „Стампа" хаçат çапла палăртса çырать: „Ишĕлӳ вăйĕсенчен чи хаярри вăл—пораженчество". Çавăнпа та хаçат пораженчествăпа кĕрешме правительствăна, унччен кăларнă законсем çителĕксĕр пулсан, çĕнĕ законсем кăларма сĕнет. „Стампа" хаçат хăйĕн сĕнĕвне çапла çирĕплетсе парать: çĕршывра „шанчăксăр çынсем ытла та нумайланса кайнă, тет. „Пополо д"Италиа" хаçат çырнă тăрăх, çаксене те шанчăксăр çынсен шутне кĕртмелле: ют çĕршывсенчи радиопередачăсене итлеме „юратакансене", ĕçе юрăхсăр тата „чунсăр" чиновниксене, пĕтĕмĕшпе каласан, „законсене пăхăнасшăн маррисене" Малалла çапла çырать: „Çавăн пек шанчăксăр çынсем çав тери нумайланса кайнă пирки режим пысăк хăрушлăх умĕнче тăрать",—тет.

Итали хаçачĕсем ютçĕршывсен радиопередачисенчен пĕлнĕ хыпарсене сарнăшăн итальянецсене нумайĕшне тыта-тыта хупни çинчен кашни кунах пĕлтереççĕ. „Стампа" хаçат çакăн пек ĕç пулнине çырса пĕлтерет: Валенца хулинче пĕр пӳрт умĕнче пысăк ушкăн халăх пухăнса тăнă. Уçса пăрахнă чӳречерен радио калани лайăх илтĕннĕ. Ку радио итальянецсен чĕлхипе Лондонран паракан передача пулнă. Вара пухăннă халăха полицейскисен отрячĕ пырса салатса янă. Радиоприемник хуçине Алессандро Негрене çавăнтах арестленĕ.

Хаçатсем „продовольствипе ĕç дисциплинине" пăснишăн, „политикăллă ответлăхăн туйăмĕ çуккишĕн" тата ыттишĕн те нумай çынна тытса хупни çинчен час-часах пĕлтереççĕ.

ЛОНДОН, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Туринра итальянец рабочийĕсем 65 пин çын ытла забастовка тунă. Вĕсем пурте—союзниксен авиацийĕ час-часас бомбăсем пырса пăрахакан заводсенче ĕçлекенсем. Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Триест хулинче портра ĕçлекен 50 пин рабочи ытла забастовка тунă

ИТАЛИПЕ ГЕРМАНИ ОККУПАНЧĔСЕНЕ ГРЕК ПАРТИЗАНĔСЕМ ХАЯРРАН ПЫРА-ПЫРА ÇАПАÇÇĔ

ЛОНДОН, июлĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Грек партизанĕсем Италипе Германи оккупанчĕсене хирĕç тĕреклĕн тăраççĕ, вĕсем тăшмана хаярран пыра-пыра çапаççĕ. Лондонри грексем илнĕ хыпарсем тăрăх, грек партизанĕсем Калабаку хулине (Фессалия) ку таранччен хăйсен аллинче тытса тăраççĕ, çавăн пекех тата хула тавра выртакан высотасем те партизансен аллинче. Итали войскисем çав хулана кĕрсе каяс тесе хăтланнă, анчах вĕсен нимĕн те тухман, вара вĕсем Трикколăна каялла чакнă. Партизансем хĕснипе итальянецсене Мецовон хулинчен тухса тарма тивнĕ. Мецовонран чакна чух итальянецсем, партизансем пыра-пыра çапнипе, засадăна лекнĕ. Кунта вĕсене чылай пысăк çухатусем кӳнĕ.

Грек патриочĕсем халĕ Итали войскисен 31-мĕш корпусĕ тăнă вырăнтан мĕнпурĕ те 20 мильăра кăна тăраççĕ. Вĕсем Триккола (Фессалия) хулипе Янина хулине çыхăнтарса тăракан питĕ кирлĕ улăха тĕрĕслесе тăраççĕ.

ВЕНГРИ САЛТАКĔСЕН НИМĔÇСЕНЕ ХИРĔÇЛЕ ШУХĂШ-КĂМĂЛĔСЕМ

СТАМБУЛ, июлĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Венгри салтакĕсем хушшинче Германие хирĕçле шухăш-кăмăлсем вăйлăланса пыраççĕ. Кăнтăр Венгрири Баранья ятлă ялта пуринчен ытла вырăнти нимĕçсем пурăнаççĕ. Çав ялта нумаях пулмасть çакăн пек ĕç пулса иртнĕ: çул май яла венгерецсен батальонĕ пырса кĕнĕ. Салтаксем пеме вĕреннĕ чухне мишень вырăнне Гитлер кăларнă агитациллĕ плаката суйласа илнĕ. Плакат çинче „Германи çĕнтерĕвĕ" тесе çырнă пулнă. Солнок ятлă станцире Венгри салтакĕсен ушкăнĕ нимĕçсен икĕ офицерне хĕнесе тăкнă.

ГИТЛЕРĂН ФРАНЦУЗ ЛАКЕЙĔСЕНЕ ОТВЕТ ТЫТМАЛЛА ПУЛАССИ ÇИНЧЕН АСĂРХАТТАРНИ

ЛОНДОН, июлĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, французсен Çурçĕр Африкăри влаçĕсем Алжирти радио тăрăх „Франци тăшманĕсене—нимĕçсене, итальянецсене тата вĕсен Вишипе Парижри тусĕсене—ответ тытмалла пуласси çинчен асăрхаттарса" каланă. Çав радиопередачăра çапла каланă: Францири государственнăй служащисене, салтаксене тата офицерсене, вĕсем нимĕçсемпе итальянецсем майлă ĕçлеме килĕшмесен, оккупантсем тĕрлĕрен хаяр асапсем кăтартаççĕ. Çавăн пекех тата француз патриочĕсен çемьисене те хурлăх кăтартаççĕ. Оккупантсем çав ирсĕр ĕçсене Виши влаçĕсем пулăшнипе туса пыраççĕ. „Гестапăпа пĕр шухăшлă пулса ĕçлекенсене çакăн çинчен пĕлтеретпĕр,—тенĕ радиопередачăра:—вĕсен мĕнпур усал ĕçĕсене пурне те тĕплĕн çырса пыратпăр, кашни француз чиновник, хăйĕн чăтăмсăрлăхĕпе ирсĕрлĕхне палăртса, хăй халăхĕн çыннисене оккупантсен аллине лекмелле тусан, çавăншăн унăн ответ тытмалла пулать. Сутăнчăксене пурне те хаяр наказани кĕтет",—тенĕ.

ЖИРО АМЕРИКĂНА КАЙНĂ

ЛОНДОН, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви каланă тăрăх, Алжирти радио паян çапла пĕлтернĕ: Жиро генерал Вашингтона тухса кайнă. Вăл Блан генерала хăй çук чухне Çурçĕр Африкăри тата французсен Хĕвеланăç Африкинчи француз войскисен командующийĕ пулма лартса хăварнă.

Пĕлтерӳ

Июлĕн 8-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, Н. К. Крупская ячĕпе тăракан садра „Тăшман сăн-сăпачĕ (хальхи Германие кам тытса тăрать)" ятлă темăпа лекци пулать.

Лекцие лектор Рассудов юлташ вулать.

Билетсене сад кассинче сутаççĕ.

ВКП(б) Горкомĕн Парткабинечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Хусанти Авиаци Институчĕ 1943-44-мĕш вĕренӳ çулĕ валли Институтăн 1-мĕш курсне тата аслă курсĕсене те студентсем илесси çинчен пĕлтерет.

Институт самолетсем тăвакан инженер-технологсене вĕрентсе кăларать.

Каçхи отделени пур. Унта урăх çĕрти ĕçе пăрахмасăр вĕренес текенсене вĕрентеççĕ.

Вĕренме кĕмелли условисем тата сывлăх тĕлĕшпе мĕнле пулмалли ытти вузсенчи пекех.

Вĕренме кĕнĕ студентсем валли Институтăн хăйне уйрăм столовăй, ОРС тата общежити пур.

Заявленисене çак адреспа ямалла: Хусан хули, Карл Маркс урамĕ, 10-мĕш номерлĕ çурт. Казавиаинститут.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1778 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2. Ф. 6. 83 62 п. л.